## Çурхи илем

Кăнтăртан вĕçсе килсен сар кайăк
Савăнса кашлать хура вăрман.
Сывлăш уçă, ĕçлеме те лайăх,
Кун пек чух пĕлместĕн ывăнма.

Çурхи сывлăш чĕрене вăй парĕ,
Ешерет умра хĕвеллĕ май.
Чечекре колхозăн капăр сачĕ,
Улмуççи, чие унта нумай.

Кăкрисем умне татса тиреççĕ
Сар хĕрсем шур çĕмĕрт çеçкине.
Кăмăлтан хавасланса итлеççĕ
Шăпчăксен хĕрӳллĕ юррине.

Юрласа хире тухать сухаçă,
Çĕн сухаçă – çамрăк тракторист.
Калчасем çăра шăтса тухаççĕ,
Ир-ирех юрра ярать тăри.

Савăнса çынсем ĕçе пикеннĕ,
Вĕсене хĕвел лăпкать хуллен.
Тăван ял чечекленет илемлĕн,
Хитререх вăл курăнать куллен.

Килĕрен итлетпĕр ирĕн-каçăн
Инçетри Мускавăн сассине.
Урамрах çут çăлтăрсем çунаççĕ,
Çутатаççĕ лăпкă каçсене.

Çуркунне! Хĕрсе юрлать сар кайăк,
Савăнса кашлать кăтра вăрман.
Мĕн тери илемлĕ пурнăç, лайăх –
Кун пекки вăл ĕмĕрне пулман!

*Волкова, М. Çурхи илем / М. Волкова // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 350.*